

# ХĔРАРĂМ ТĔНЧЕ ТЫТАТЬ



Проект авторĕ – Светлана Чикмякова. сайт: putpobedy.ru

**Хĕрарăм паян кил-çурта тирпейлекен тата ачасене воспитани паракан çеç мар, вăл çемьене тăрантаракан та. Ун социаллă пурнăçри, экономикăри ролĕ çав тери пысăк. Уйрăмах этемлĕхĕн илемлĕ çурри вĕрентӳ, сывлăх сыхлавĕ, социаллă хӳтлĕх сферинче ытларах тимлет. Вĕсемех паян производствăра та кăтартуллă ĕçлеççĕ... Чăваш ен Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланакан проект шăпах пултаруллă хĕрарăмсем – аннесем, чăваш йăли-йĕркисене упракансем, нацин тĕрĕс воспитанине, экономика çĕкленĕвне тӳпе хывнă тата хывакансем, обществăлла ĕç хастарĕсем – пирки каласа кăтартать.**

## Ĕç – пурнăç

**Çак сăмахсене Вăрнарти ача-пăча ӳнер шкулĕн директорĕ Татьяна Ильина ахальтен каламасть. Юратнă ĕç ăна çунатлантарать, тĕллевсене пурнăçлама хăват кӳрет.**



*Чыслав саманчĕ.*

Татьяна Васильевнана Турри пысăк талант парнеленĕ – юрă-кĕвĕ тĕнчин вăрттăнлăхĕсене пĕлме пӳрнĕ. Кунтан та ытла вăл пултарулăхне ачасенче хывма пултарнишĕн хăйне икĕ хут телейлĕрех туять.

Татьяна Ильина ача-пăча ӳнер шкулĕнче 30 çула яхăн тăрăшать, çичĕ çул ытла – ертӳçĕре. Çак тапхăрта миçе ăру искусствăпа туслашман пулĕ, миçе ача ун йĕрĕпе кайма ĕмĕтленнĕ.

Юлашки çулсенче ачасене хушма пĕлӳ парасси палăрмаллах ӳсрĕ. Çакна ӳнер шкулĕ кашни кун кĕçĕннисен сассипе тулни те çирĕплетет. Кунта художество, музыка, ташă культурине ӳстерме пулать. Тĕрлĕрен мероприятисем те, çулталăкра вĕсем 100-е яхăн иртеççĕ, ачасен пултарулăхне ӳстерес тĕллевлĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ ку учрежденин воспитанникĕсем çулсерен тĕрлĕ шайри творчество конкурсĕсенче палăраççĕ. Пĕлтĕр, сăмахран, пандемие пăхмасăр 28 конкурспа акцире тупăшнă. Пĕтĕм тĕнчери икĕ конкурсра çĕнтернĕ. Пĕтĕм Раççей шайĕнче виçĕ 1-мĕш, виçĕ 2-мĕш, пĕр 3-мĕш вырăн йышăннă. «Синяя птица» хор çĕршыври «Краски Чувашии» конкурсăн лауреачĕ пулса тăнă. Регионсем хушшинчи, республикăри конкурссенче çĕнтерӳçĕсен, призерсен йышне кĕнĕ.

– Çак çитĕнӳсем пĕтĕмпех коллектив тивлечĕ, – тет Татьяна Васильевна сăпайлăн.

Тĕрĕссипе, кунта ертӳçĕн тӳпи те питĕ пысăк. Директор ĕç, вĕренӳ условийĕсене лайăхлатас тесе чунтан тăрăшать. Юлашки çулсенчи юсав, пурлăхпа техника базине пуянлатассипе тунă ĕçсем те çакна «калаççĕ».

– Ĕç манăн – пурнăç. Çакнашкал телее туйма пӳрнишĕн чунтан савăнатăп. Ӳнер шкулне çӳрекен кашни ачана хам ача пек, ĕçтешсене çывăх тăван пек йышăнатăп!.. – çакнашкал сăмахсем чĕререн ăнсăртран тухмаççĕ.

Обществăлла ĕçсенче те хастар вăл. Чылай çул ĕнтĕ культура ĕçченĕсен профсоюзĕн районти комитетне ертсе пырать, тĕрлĕ мероприятисем йĕркелет.

Ĕçне пăхса хакне пар, тенĕ ваттисем. Татьяна Васильевнан пархатарлă ĕçне те асăрхамасăр хăварман. Иртнĕ эрнере, акă, ăна культура аталанăвне тӳпе хывнăшăн тата нумай çулхи ырми-канми ĕçшĕн Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Тавĕпе чысланă. Ытти наградăсем те чылай.

Татьяна Васильевна ырă тĕслĕхе курса çитĕннĕ. Унăн ашшĕпе амăшĕ те хисеплĕ çынсем: Василий Яковлевич Львов нумай çул поселок администрацийĕн пуçлăхĕнче тăрăшнă, кăтартуллă ĕçпе палăрнă (шел, ун пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ). Амăшĕн Альбина Андреевнан ĕç-хĕлĕ «Сельхозтехника» организаципе çыхăннă.

Татьянăпа Александр Ильинсем хĕрпе ывăл çитĕнтереççĕ. Ачисене тĕрĕс çулпа пыма, çĕршыва юрăхлă пулма вĕрентеççĕ.

## Йывăрлăхсене парăнман

**Сиккипе пыракан лашана чарĕ, çунакан çурта та кĕрĕ... – хĕрарăмсене мухтакан çак каларăш ăнсăртран çуралман. Пурнăçран тухнă вăл. Хĕрарăмсем чăнах та пĕтĕм этемлĕхе тытса пынине пурнăç ĕнентерет.**



Аслă вăрçă, ун хыççăнхи çулсенчи йывăрлăхсене активнĕ хĕр-хĕрарăмсенех тĕслĕхе илер. Хăйсен черченкĕ хулпуççийĕсем çине тиеннĕ нуши-тертне нихçан никамăн курмалла ан пултăр, теççĕ вĕсем пурте. Туçи Çармăсри Нина Степановна Михайлова та çаплах. Унăн та – тыл ĕçченĕн, ĕç ветеранĕн – пурнăçĕ çăмăл килнĕ тееймĕн. Ачалăхĕпе çамрăклăхĕ выляса-савăнса иртмен. Мĕнпур ĕмĕте хăрушă вăрçă çапса хуçнă. Мĕн пĕчĕкренех аслисемпе танах колхоз уйĕсенче пилĕк авнă, пĕр пучах выртарса хăвармасăр тырпул пухма пулăшнă. Йывăр пулсан та юлхавланма хăтланман.

Çапла каласа панă вăл нумаях пулмасть хăйĕн патне саламсемпе килнĕ хăнасене. Саламсен сăлтавĕ вара сумлă – Нина Степановна тăхăр теçетке урлă каçнă. Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн тата район администрацийĕн пуçлăхĕн Андрей Тихоновăн ырă сăмахĕсемлĕ çырăвĕсене ял поселенийĕн ертӳçи Сергей Волков çитернĕ. Вăл Нина Степановна ял-йышра чи хисеплĕ çынсенчен пĕри пулнине палăртнă, вăрăм та сывлăхлă кун-çул суннă.

– Вăрçă вĕçнелле пире, çап-çамрăк хĕрсене, Киря тăрăхне вăрман ĕçлеме ăсатрĕç. Кунĕпе ларса канма вăхăт çук, çири тумтир каçхине те типме ĕлкĕрейместчĕ – ирхине çаплипех йывăç касма тухса утнă. Асрах-ха, пĕрре смена вĕçленсен киле кайма ирĕк пачĕç. Юрĕ пилĕк таран хӳсе лартнă, пĕр-ик утăм тăвасси те чĕр нуша. Çул çуккине пăхмасăрах çавах Йĕпреçе чакаланса тухрăмăр, унтан пăравуспа Вăрнара çитме пултартăмăр, – аса илнĕ тыл ĕçченĕ калаçу вăхăтĕнче.

Çамрăклăх пĕрре килет-çке. Темле тертлĕ пулсан та тунсăхлас килмест. Кунĕпе уй-хирте тар тăкнă хыççăн каçсерен фронтовиксем валли алсиш-нуски çыхма пухăннине, улахра хĕрсем темиçе çаврăм та пулин юрă шăрантарнине те, ташă картине тухнине те аса илнĕ Нина Степановна.

Мăшăрĕпе Александр Михайловичпа вĕсем пилĕк ачана çуратса ӳстернĕ, воспитани парса пурнăç çулĕ çине кăларнă. Ĕмĕр тăршшĕпех маттур хĕрарăм тăван колхозра ырми-канми тăрăшнă: фермăра та вăй хунă, уй-хир ĕçĕсенчен те юлман. Алăра сăпка ачи пулсан та килте ларман ун чухне.

Пепкесене пăхса-ӳстерме пулăшнишĕн вăл хуняшшĕне ыр сăмахсемпе аса илнĕ. Лара-тăра пĕлмен виçĕ ывăлĕпе икĕ хĕрне асăрхаса тăма мĕнле ĕлкĕрнĕ-ши, тесе тĕлĕннĕ. Халĕ хăй те мăнукĕсенчен пуян ĕнтĕ. Вунпилĕк мăнуксăр пуçне вунтăхăр кĕçĕн мăнукĕ уншăн – чăннипех те пурнăçри телейпе савăнăç.

**Хамăр инф.**

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.